Муркаш район хаçачĕ

# Çĕнтерӳ ялавĕ

1944 çулхи çу уйăхĕн 5-мĕшĕнчепе тухать

44 (8110) № ✻ Шăмат кун, 2013 çулхи çĕртме (июнь) уйăхĕн 22-мĕшĕ ✻ Хакĕ ирĕклĕ


## Уяв ĕçлĕ лару-тăрура иртет



Республика кунĕн вичинче иртекен мероприятисем шутĕнче «Раççей регионĕсем – тăнăçлăхран аталану патне» 6-мĕш экономика форумĕ тата регионсем хушшинчи «Регионсем – чикĕсĕр ĕçтешлĕх» курав тĕп вырăн йышăнаççĕ. Вĕсем июнĕн 20-мĕшĕнче уçăлчĕç. Асăннă мероприятисене Муркаш районĕн ĕçлĕ делегацийĕ те хутшăнчĕ. Ăна район администрацийĕн пуçлăхĕ Ростислав Тимофеев ертсе пычĕ.

– Çулсеренех иртекен куравсем, форумсем уйрăмах пĕчĕк тата вăтам предпринимательлĕх субъекчĕсемшĕн пысăк пĕлтерĕшлĕ. Вĕсем хăйсен ĕçĕ-хĕлĕпе ыттисене паллаштарма, килĕшӳсем тума пултараççĕ. Раççей Пĕтĕм тĕнчери суту-илӳ организацине кĕнĕ май пирĕн ытларах тата çаврăнăçуллăрах тимлеме тивет. Паянхи кун пысăк конкуренцие çĕнтерме пултаракан продукци хатĕрлемелле, – терĕ Чăваш Республикин Пуçлăхĕ Михаил Игнатьев кунта пухăннисене саламласа тата пурнăç уттипе тан пыма чĕнсе.

Курава уçнă май М. Игнатьев экспозицисемпе паллашрĕ. Кунта хутшăнакансем пĕтĕмпе 195-ĕн – Чăваш Республикинчен 172 компани тата Раççей регионĕнчи 23 компани. Курава Тавралăха хӳтĕлемелли çулталăка тата экологие халалланă.

Асăннă куравра Муркаш районĕн ĕçлĕ сăн-сăпачĕ тивĕçлĕ шайра пулчĕ. «Сеспель» – республикăри машинăсем тăвакан пысăк предприятисенчен пĕри. Кунта цистернăсен 100 ытла модельне ăсталаса кăлараççĕ. Производствăра тĕнче стандарчĕсене тивĕçтерекен оборудование усă кураççĕ. Хатĕр продукципе курава хутшăнакансем кăсăкланни аван сисĕнчĕ.

Республика кунĕ

Муркашри кирпĕч завочĕн партнерĕсем юлашки çулсенче йышлансах пыраççĕ. Хатĕр продукципе республика тулашĕнче те анлăн усă кураççĕ. Çавна май пĕтĕмĕшле тупăш илесси те палăрмаллах ӳсрĕ. Предприяти курав вăхăтĕнче килĕшӳсем тума та ĕлкĕрчĕ ĕнтĕ.

Çавăн пекех Муркашри чăх-чĕп фабрикин, «Сежина» тата «Федоровстрой» чикĕллĕ яваплăхлă обществăсен экспозицийĕсем куракансăн кăсăклă пулчĕ.

**Курав июнĕн 23-мĕшĕччен ĕçлет, Муркаш районĕн тата ытти экспозицисене çитсе курма васкăр.**

**Р. ИЛЛАРИОНОВА.**




**Сăн ӳкерчĕксенче: район администрацийĕн пуçлăхĕ Р. Тимофеев ЧР Пуçлăхне М. Игнатьева, ЧР Патшалăх Канашĕн ертӳçине Ю. Попова район пуласлăхĕпе паллаштарать. Муркашри кирпĕч завочĕн директорĕн çумĕ Ю. Петров куравра.**

Хаклă ентешĕмĕрсем!

Сире Республика кунĕ ячĕпе чун-чĕререн саламлатăп!

Çак паллă кун Чăваш Ене – тĕрлĕ наци йышĕнчи тата тĕрлĕ тĕне ĕненекен çынсем мĕн авалтан туслăн та килĕштерсе пурăнакан çĕр пин тĕрĕ тата çĕр-шывне чунтан юратакан мĕн пур çыншăн уйрăмах çывăх.

Пирĕн республика, Раççей Федерацийĕнчи уйрăм аталанакан регионсен йышĕнче тивĕçлĕ вырăнта тăнă май, аталанупа прогресс çулĕпе шанчăклăн та вăхăтпа тан утать.

Промышленноç, ял хуçалăх тата строительство индустрийĕ çĕнелесçĕ, пĕчĕк тата вăтам бизнеса патшалăх кўрекен пулăшу палăрмаллах ӳснĕ, гражданесене социаллă пулăшупа тивĕçтерессин шайĕ пысăкланать, медицина тата вĕренӳ енĕпе паракан пулăшу ĕçĕсен пахалăхĕпе юрăхлăхĕ куç умĕнчех лайăхланаççĕ.

Çамрăк çемьесене пулăшасси, çавăн пекех ача амăшĕсене хӳтĕлесси çине уйрăмах тимлĕн пăхатпăр. Спорта тата сывă пурнăç йĕркине халăх хушшинче пропагандăлас ĕç ăнăçлăн пурнăçланать. Республикăра пурăнакан кашни виççĕмĕш çын физкультурăпа туслă тата хăйĕн сывлăхне вăл пулăшнипе çирĕплетет. Йышăннă мерăсене пула пĕлтĕр Чăваш Енре 20 çул хушшинче пуçласа халăх хăй хальлĕн ӳснине палăртнă.

Чăваш Ен халăхĕ тăван çĕре пĕтĕм чунтан юратать, унăн нумай ĕмĕре тăсăлакан историйĕпе мăнаçланать, хăйĕн наци йăли-йĕркине тата мăн аслашшĕсен пуян ăс-хакăл еткерне типтерлĕн сыхласа упрать. Республикăра пурăнакансен ĕçченлĕхĕ, пысăк ăсĕ тата çӳллĕ шайри культури влаç органĕсен тухăçлă ĕçĕпе пĕрлешсе обществăри çирĕплĕхе малалла та сыхласа упрама, экономикăна аталантарса чечеклентерме, гражданесен социаллă хӳтĕлĕхне çирĕплетме пулăшасси пирки иккĕленместĕп.

Пĕтĕм кăмăлтан çирĕп сывлăх, ырă шанăç, юратупа телей тата ырлăх сунатăп!

**Чăваш Республикин Пуçлăхĕ**
**М. ИГНАТЬЕВ.**

Указ

## Республика кунне ирттерме – грант

Чăваш Республикин Пуçлăхĕ Михаил Игнатьев 2013 çулхи июнĕн 10-мĕшĕнче 57 № Указа алă пуснă. Унпа килĕшӳллĕн Республика кунне уявланă май хăйсен территорийĕнче мероприятисем ирттерме муниципалитет районĕсемпе хула округĕсем хушшинче конкурс йĕркелĕç. Конкурсра çĕнтернĕ муниципалитет районĕсене тата хула округĕсене хавхалантарма (вĕсем ялхулан общество инфратытăмне аталантарччăр тесе) Чăваш Республикин Пуçлăхĕн кашни çулах паракан 10 млн тенкĕ грантне пăхса хунă.

Çырăнтару – 2013

## Çырăнтару вĕçленет. Васкăр!

**«Çĕнтерӳ ялавĕ» хаçата июльтен илсе тăма çырăнтармалли тапхăр вĕçленсе пырать.**

**Хаçата 6 уйăха çырăнмалли хак – 216 тенкĕ те 30 пус. Хаклă вулаканăм! Малашне те пĕрле пулар!**

Çĕнĕлĕх

## Кашни объектăн – хăйĕн номер

Куçман пурлăхăн тата унпа усă курассин правин патшалăхăн пĕрлехи реестрĕнче малашне капиталлă строительство объекчĕсен условнăй номерĕсене кадастр номерĕсемпе улăштарма пăхнă. Çакă харпăрлăхăн уннчен регистрациленĕ правине улăштармасть.

Кăмăл пулсан патшалăх регистрацийĕн çĕнĕ свидетельствине илнĕ чухне кадастр номерĕсем тата капиталлă строительство объекчĕсен номерĕсем пирки сведенисем кĕрттерме пулать.

РФ Налук кодексĕпе килĕшӳллĕн çĕнĕ свидетельство илнĕшĕн уйрăм çынсен 200 тенкĕ, организацисен 600 тенкĕ тӳлемелле. Патшалăх регистрацийĕн свидетельствине илме Управленин объект вырнаçнă вырăнти территори уйрăмне пымалла. Асăрхаттаратпăр, уннчен панă свидетельствăсем те вăйрах.

Патшалăх регистрацийĕ валли документсене патшалăх регистрацийĕн, кадастрăн тата картографин федераци службин Чăваш Республикинчи управленийĕнче тата унăн филиалĕсенче вырсарни кунсăр пуçне кунсерен йышăнаççĕ.

**Росреестрăн Чăваш Республикинчи управленийĕ.**

РАЙОНТА: ĕнер, паян, ыран

## Выльăх апачĕ хушăнать

Оперативлă кăтартусене пăхсан, ĕнерхи кун тĕлне районти çĕр ĕçченĕ утă хатĕрлессипе палăртнă плана 17 процент (950 тонна) пурнăçланă.

Кăçал кĕске хушăрах Чкалов яч. хис. хуçалăх (200 тонна – 100 процент), «Путь Ильича» агрофирма (510 тонна – 48 процент), Е. Андреев яч. хис. хуçалăх (100 тонна – 40 процент) утă янтăлама пултарнă.

Обществăлла выльăх-чĕрлĕхе хĕл каçарма выльăх апачĕ янтăлассипе хĕрӳ кунсем пыраççĕ. Çĕр ĕçченĕ çак ĕçе çанă тавăрса кӳлĕннĕрен хатĕрленĕ апат кăтартăвĕ те кунсеренех ӳссе пырать. Иртнĕ кунсенче «Ударник» хуçалăх сенаж янтăлама пуçланă. Тăрăшуллă ĕçпе 200 тонна паха апат янтăланă та ĕнтĕ.

## «Пĕр чӳрече» мелĕпе

Район администрацийĕн ĕçченĕсем тата патшалăхпа муниципалитет услугисемпе тивĕçтерекен нумай функциллĕ центр ĕçченĕсем Мари Республикинчи Йошкар-Ола хулинче иртнĕ регионсем хушшинчи пысăк конференцие хутшăннă. Ăна Мари Республикин Правительствипе «Раççей почти» ФГУП çынсене патшалăх тата муниципалитет услугисемпе «пĕр чӳрече» мелĕпе тивĕçтерес ыйтупа йĕркеленĕ. Унта хутшăнакансем республикăра патшалăх тата муниципалитет услугисемпе тивĕçтерессине «Раççей почтин» çыхăну уйрăмĕсенче епле йĕркелеmipе интересленсе паллашнă.

Аса илтеретпĕр. «Пĕр чӳрече» мелĕпе çынсене пулăшу ĕçĕсемпе тивĕçтересси пирĕн районта та сарăлса пырать. Июлĕн 1-мĕшĕ тĕлне Шетмĕнуçĕнчи, Йӳçкассинчи, Катькасри, Мăн Сĕнтĕрти, Ильинкăри, Турайри, Юнкăри, Çатракассинчи, Чуманкассинчи тĕслĕх библиотекăсенче кун пек центрсем ĕçлеме пуçăнмалла. Çулталăк вĕçленнĕ тĕле «пĕр чӳрече» мелĕпе пулăшу ĕçĕсемпе тивĕçтерекен центрсем татах 6 библиотекăра уçăлмалла.

## Ăсататпăр салтака

Июнĕн 18-мĕшĕнче районти яшкĕрĕмĕн черетлĕ тепĕр ушкăнне Раççей Хĕçпăшаллă Вăйĕсен чаçĕсене службăна кайма республикăри пухăну пунктне Канаш хулине ăсатнă. Вĕсем Тĕп çар округĕнче Самара тата Оренбург облаçĕсенче хăйсен çар тивĕçне пурнăçлĕç. Кунта кайма чи маттур йĕкĕтсене суйласа илнĕ. Кусем вĕсем «В» тата «С» категорисемлĕ водительсен, аслă пĕлӳ илнисем, спортсменсем, сывлăх енĕпе çирĕпписем.

## Пĕрлехи портал урлă

Патшалăх тата муниципалитет услугисен пĕрлехи порталĕпе усă курса паракан пулăшу ĕçĕсен тĕсĕсем ӳссех пыраççĕ. ЗАГС пайĕн услугисемпе усă курас пулсан та халĕ пур чухне те унта кайма кирлех мар. Акă çак вăхăта ача çуралнине, мăшăрсем пĕрлешнине, пĕрпĕринчен уйрăлнине, çын вилнине регистрацилес пулсан та заявленисене электрон мелĕпе ярса пама пулать. Çавна валли кирек кама та патшалăх тата муниципалитет услугисен пĕрлехи порталĕнче регистрациленсе «Личный кабинет» тумалла çеç.

Кирлĕ информацие Чăваш Ен юстици министерствин сайтĕнче (gosuslugi.ru) е Муркаш район администрацийĕн сайтĕнче ЗАГС пайĕн баннерĕнче паллашма пулать.

## Ырă пуçару

Катькас ял тăрăхĕнчи Кĕрекасăра ачасен кĕтнĕ саванăç çитнĕ: ялти клубла юнашар халĕ кунта ача-пăча валли вылямалли вырăн та пур. Кунта вырнаçтарнă хатĕрсене çак ялта çуралса ӳснĕ, халĕ «Завод игрового оборудования» акционерсен хупă пĕрлешĕвĕн генеральнăй директорĕ Григорий Васильев парнеленĕ. Кану вырăнне йĕркелеме пулăшнисене ял тăрăхĕн пуçлăхĕ Тав çырăвĕсем парса хавхалантарнă.

Ачасен кану вырăнне пухăннисене Катькасри ИКЦ çумĕнчи «Çăлкуç» фольклор ушкăнĕ тата Калайкассинчи «Ентеш» пултарулăх коллективĕ савăнтарнă.

**В. ШАПОШНИКОВ, Н. НИКОЛАЕВА, А. БЕЛОВ хатĕрленĕ.**

# Хамăр çине ытларах шанăç хумалла



**Сăмах – район администрацийĕн ĕçченĕсене**

***Бюджет, укçа-тенкĕ ыйтăвĕ, паллă ĕнтĕ, чи кăткăс, тавлашусем çуратакан ыйтусенчен пĕри. Мĕншĕн тесен кирек епле ыйтăва татса парас пулсан та ытларах чухне укçа-тенкĕ проблеми мала тухать. Акă ял çыннисен пурнăç шайне хăпартса пырассинех илер. Калăпăр, вырăнти ял тăрăхĕн бюджечĕ тупăшсем енĕпе аван пурнăçланать пулсан, ял çыннисен кулленхи ыйтăвĕсене татса пама та майсем ытларах. Çавăнпа та район хаçачĕн сотрудникĕ В. ШАПОШНИКОВ район администрацийĕн финанс пайĕн пуçлăхĕпе Рената АНАНЬЕВĂПА тĕл пулнă май ял тăрăхĕсен бюджечĕ пирки сăмах пуçарма ыйтнă.***

– Чăнах та ĕнтĕ вырăнти бюджетсем вĕсем – Раççей бюджет системин пĕр пайĕ. Шăпах çакăнти укçа-тенкĕ ытларах çынсен кулленхи пурнăç ыйтăвĕсене тивĕçтерме кайса тăрать.

Районăн пĕрлехи бюджетне илес пулсан вăл район муниципалитет бюджетĕнчен тата 16 ял тăрăхĕн бюджетĕнчен йĕркеленет. Тăкаксем енĕпе илес пулсан ăна 2013 çул валли 475,7 млн тенкĕ пăхса хунă. Укçа-тенкĕн ытларах пайне культурăпа социаллă сфера объекчĕсен ĕçне тивĕçтерме уйăратпăр. Акă вĕрентӳ системи çине 309,6 млн тенкĕ е пĕтĕмĕшле суммăн 65 процентчĕ чухлĕ тăкакланать, культура сфери валли – 36,4 млн тенкĕ (8 процента яхăн), физкультурăпа спорт валли 4,8 млн тенкĕ (1 процент). Кунпа пĕрлех пĕрлехи çулсене тытса тăма тата юсама, тĕрлĕ программăсене хутшăнса пурăнмалли çурт-йĕр илекенсене субсидисемпе тивĕçтерме тата ытти тĕллевпе те район бюджетĕнчен укçа-тенкĕ уйăратпăр. Инвестицисем пирки калас пулсан вĕсен калăпăшĕ 14,5 млн тенкĕпе (3 процент) танлашать. Депутатсен районти Пухăвĕн йышăнăвĕпе çулталăк пуçланнăранпа икĕ хут район бюджетне улшăнусем кĕртме тиврĕ ĕнтĕ. Улшăнусен ытларах пайĕ бюджет сферин ĕçченĕсен хăш-пĕр категорийĕсен шалăвне ӳстерессипе çыхăннă. Çак тĕллевпе унччен палăртнинчен 23,4 млн тенкĕ укçа ытларах уйăрма тиврĕ. Кунсăр пуçне культурăпа социаллă сфера объекчĕсенче юсав ĕçĕсем туса ирттерме тата 6,3 млн тенкĕ хушма укçа-тенкĕ уйăрнă.

Çулталăкăн 5 уйăхĕ хыçа юлчĕ ĕнтĕ. Çак тапхăрта районăн пĕрлехи бюджетне 176,9 млн тенкĕ укçа пухăннă. Вăл шутран 66,3 млн тенкĕ хамăр «ĕçлесе илни» тата 110,6 млн тенкĕ – республика бюджетĕнчен каялла тавăрса памалла мар куçарса пани. Палăртма кăмăллă, иртнĕ çулхи çав тапхăртипе танлаштарсан хамăрăн тупăшсен калăпăшĕ пĕтĕмĕшле 26,3 процент е 13,8 млн тенкĕ ӳсрĕ.

Вырăнти бюджетра хамăрăн тупăшсен пайĕ мĕнрен йĕркеленет-ха? Кусем вĕсем уйрăм çынсен тупăшĕнчен илекен налук (70 – 75 процент), çĕре арендăна панинчен илекен тӳлев (10 – 15 процент), çĕр налукĕ, уйрăм çынсен пурлăхĕнчен илекен налук, çĕр участокĕсем сутнинчен тата муниципалитетăн усă курман пурлăхне сутнинчен илнĕ тупăш т. ыт. те.

Район бюджечĕ тупăшсем енĕпе мĕнле пуласси территорири предприятисем, организацисем епле ĕçлесе пынипе тӳрремĕнех çыхăннă. Район бюджетĕнчи хамăрăн тупăшсен калăпăшĕнче «Сеспель» предприяти тӳпи 14 – 16 процент, Муркаш райповĕн – 5 – 6 процент, Мăн Сĕнтĕр райповĕн – 4 – 5 процент. Юлнă сумма ытти предприятисемпе учрежденисенчен тата уйрăм çынсенчен пуçтарăнать.

Республика бюджетĕнчен каялла тавăрса памалла мар укçа-тенкĕне ытларах чухне тĕллевлĕ майпа уйăраççĕ. Унпа ытти тĕллевсемпе усă курма май çук.

16 ял тăрăхĕн кашнин хăйĕн бюджечĕ. Ял тăрăхĕсен бюджечĕ те хăйсем пуçтарнă налуксенчен тата уйрăм тĕллевпе уйăрнă каялла тавăрса памалла мар укçа-тенкĕрен йĕркеленет. Кăçалхи январь – май уйăхĕсенче ял тăрăхĕсен бюджечĕсене 32,5 млн тенкĕ пухăннă. Вăл шутран хăйсем пуçтарнă сумма – 13,6 млн тенкĕ (çулталăк планĕ – 27,1 млн тенкĕ). Тепĕр майлă каласан çулталăк планне çуррине пурнăçланă ĕнтĕ. Çапах та тĕрлĕ ял тăрăхĕсенче кăтартусем расна. Территорире çынсем ытларах пурăнакан тата экономика тĕлĕшпе активлăрах ял тăрăхĕсенче лару-тăру япăхах мар. Акă Москакасси ял тăрăхĕ районтан та, республикăран та дотаци пачах илсе тăмасть. Муркаш, Мăн Сĕнтĕр ял тăрăхĕсем те хăйсен тупăш тумалли çулталăк планĕсене 40 – 45 процент тултарма пултарчĕç. Шел пулин те, Йӳçкасси, Шетмĕпуç тата Çатракасси ял тăрăхĕсем пирки вара çак сăмахсене калама çук. Хăйсем укçа-тенкĕ пухмалли çулталăк планĕсене вĕсем çак вăхăта 13,2 – 17 процент кăна тултарчĕç, 5 уйăх хушшинче бюджета 160 – 300-шер пин тенкĕ пухса çитерейменĕç. Çакăн пекех пулсан бюджет шучĕпе туса ирттермелли ĕçсем те хут çинче кăна юлма пултараççĕ. Хальхи вăхăтра ку ял тăрăхĕсен пуçлăхĕсемпе пĕрле лару-тăрăва улăштарас, çулталăк валли палăртнă обязательствăсене пурнăçлас енĕпе мерăсем йышăнатпăр. Ял тăрăхĕсен пуçлăхĕсене налук органĕсемпе пĕрле çыхăнса ĕçлеме, вырăнти бюджет умĕнче парăм пуррисенчен çирĕпрех ыйтма сĕнетпĕр.

Ытти сферăри пекех, пирĕн ĕçре те юлашки вăхăтра çĕнĕлĕхсем нумай. Обществăлла финанссене йĕркелесе пырас сферăра технологисем те, программăсемпе тивĕçтерессисем те çĕнелсе пыраççĕ. Чăваш Ен – «Электрон бюджетне» пурнăçа кĕртессипе пилот регионĕ. Бюджет укçи-тенкине илсе тăракансен даннăйсен базине çĕнетсе улăштарассипе, актуализацилессипе питĕ пысăк калăпăшлă ĕç туса ирттертĕмĕр. Халĕ эпир муниципалитет учрежденийĕсен планпа учет службисен ĕçченĕсемпе пĕрле бюджет тата бухгалтери отчетлăхне пухса йĕркелес тата пĕр тытăма пĕрлештерес ĕçе çĕнетсе улăштарассипе тимлетпĕр.

**КĔСКЕ СПРАВКА. Пĕтĕм Раççейри «Финанссемпе усă курас енĕпе Раççейри чи лайăх муниципаллă йĕркеленӳ» 6-мĕш конкурса хутшăнса Муркаш районĕ 2012 çул итогĕсемпе мала тухрĕ, 1-мĕш степень диплома тивĕçрĕ.**

**Саламлатпăр**



Юратнă та хаклă шăллăма, мучие – Çатракасси ялĕнче пурăнакан **Геннадий Петрович ЛЮБИМОВА** çĕртме уйăхĕн 22-мĕшĕнчи 60 çулхи сумлă юбилей ячĕпе чун-чĕререн ăшшăн саламлатпăр.Турри сана вăй-хал парса тăтăр, чир-чĕртен упратăр. Юман пек çирĕп сывлăх, телей, ăнăçу сунатпăр.

**Саламлаканĕсем: Савельевсем, Петровсем, Михайловсем, Блиновсем.**

**Республикăра**

## Чăваш турпроектне федераци шайĕнче ырланă

7,6 миллиард тенкĕ тăракан чăваш турист проектне федераци шайĕнче ырланă. Республика спорт министерствинче REGNUM информаци агентствине пĕлтернĕ тăрăх «Этническая Чувашия» туристпа рекреаци кластерĕ (пĕр вырăнти турист ĕçĕ-хĕлĕн тытăмĕ) шалти тата тулашри туризма аталантарассипе федерацин 2011 – 2018 çулсем валли пăхса хунă тĕллевлĕ программине кĕрет.

Чăваш Енĕн инвестици проектне 2013 çултан тытăнса федерацин тĕллевлĕ программине кĕртесси пирки Ростуризмăн координаци канашĕн ларăвĕнче йышăну тунă. Ларура проекта Чăваш Енĕн премьер-министрĕ Иван Моторин хӳтĕлесе тухса калаçнă. Унта палăртнă тăрăх Чăваш Республикисĕр пуçне 2013 çулта финанслама тата 4 регион проектне суйласа илнĕ. Кусем Чечен Республики, Калуга тата Оренбург облаçĕсем, Ямало-Ненецк автономи облаçĕ. ЧР спорт министерствинче çавна палăртаççĕ: республика инвестици проекчĕ конкурса тăратнă ытти проектсем хушшинчи чи нумай – 70 балл илме пултарнă.

«Этническая Чувашия» кластер инвестицин икĕ проектĕнчен тăрать: Шупашкар районĕнчи «Ясна» этно-экологи комплексĕ тата Шупашкар 500 çул тултарни ячĕллĕ культурăпа кану паркĕн территорийĕнчи «Амазония» этнокомплекс. Ку проектсем логика тĕлĕшпе пĕр-пĕринпе килĕшсе тăраççĕ, республикăра этника тата круиз туризмне аталантарма пулăшаççĕ. Проект экономикăпа социаллă аталану тĕлĕшпе Чăваш Еншĕн кăна мар, пĕтĕм Атăл тăрăхĕшĕн питех те пысăк пĕлтерĕшлĕ тата кирлĕ.

Ведомствăра палăртнă тăрăх проекта пурнăçа кĕртнĕ май турист инфраструктурин пĕр пĕтĕм комплексне туса хатĕрлеме пăхнă: çынсене вырнаçтармалли вырăнсем, апатлану предприятийĕсем, выставка, культура, спортпа сывлăх сиплевĕн тата кану инфраструктурин объекчĕсем.

Турист объекчĕсен строительствин пĕтĕмĕшле лаптăкĕ 246 пин тăваткал метрпа танлашать. Проект хакĕ – 7680,195 млн тенкĕ, туробъектсен хакĕ – 5624,23 млн тенкĕ. Проекта 2013 – 2017 çулсенче федераци, республика бюджечĕсем шучĕпе тата бюджетпа çыхăнман çăл куçсенчен финансласа пурнăçа кĕртме палăртнă. Вăл шутран кăçал 796 млн ытла тенкĕ уйăрĕç: 60 млн – федераци, 10 млн – республика тата 726 млн – бюджетпа çыхăнман укçа-тенкĕ.

**Хаксем**

## Коммуналлă услугăсен хакĕсем ӳсеççĕ

Унччен пĕлтернĕччĕ ĕнтĕ, коммуналлă услугăсен тарифĕсем кăçалхи пĕрремĕш çур çулта хăпарман, вĕсем 2012 çулхи декабрь уйăхĕнчи шайрах юлнă. 2013 çулхи июлĕн 1-мĕшĕнчен тытăнса вара ăшăпа, электроэнергипе, газпа, сивĕ тата вĕри шывпа тивĕçтернĕшĕн, таса мар шыва юхтарса кăларнăшăн тӳлемелли тарифсем улшăнаççĕ.

**Электроэнерги** тарифĕсене ЧР Конкурентлă политикăпа тарифсен патшалăх службин йышăнăвĕпе 2012 çулхи ноябрĕн 23-мĕшĕнче çирĕплетнĕ. 2013 çулхи июлĕн 1-мĕшĕнчен вăл 1 кВт-сехетшĕн хула çыннисем валли 2 тенкĕ те 51 пус, ял çыннисем валли 1 тенкĕ те 76 пус пулĕ (унччен 1 тенкĕ те 53 пуспа танлашнă).

**Çут çанталăк газĕн** хакне Чăваш Республикин Министрсен Кабинечĕ 2013 çулхи июнĕн 13-мĕшĕнче çирĕплетрĕ. Çитес уйăхран унăн 1 кубла метрĕн хакĕ – 4 тенкĕ те 50 пус (3 тенкĕ те 94 пус пулнă).

2013 çул валли Патшалăх службин йышăнăвĕсемпе сивĕ шыв парса тăнăшăн тата таса мар шыва юхтарса кăларнăшăн, ăшă энергийĕпе тивĕçтернĕшĕн, вĕри шыв парса тăнăшăн тӳлемелли тарифсене çирĕплетнĕ.

Çӳлте асăннă пур информацие «Тарифы на ЖКУ для населения» уйрăмра «Горячая линия: Тарифы на жилищно-коммунальные услуги» баннерта вырнаçтарнă. Кунта 2005 çултан тытăнса Чăваш Республикинчи муниципалитет йĕркеленĕвĕсенчи коммуналлă услугăсен тарифĕсемпе паллашма пулать.

Çапла вара ял çыннисем валли тарифсем 2012 çулпа танлаштарсан çулталăкра вăтамран электроэнергипе усă курнăшăн 10,1 процент, сивĕ шыв парса тăнăшăн тата таса мар шыва юхтарса кăларнăшăн 7,6 процент, хутса ăшăтнăшăн тата вĕри шыв парса тăнăшăн 8,5 процент, газпа тивĕçтернĕшĕн 14,5 процент ӳсеççĕ.

Çавна та каласа хăвармалла. Чăваш Республикин Министрсен Кабинечĕн 2013 çулхи майăн 16-мĕшĕнчи йышăнăвĕпе пĕтĕмĕшле çурт валли каякан нормативсене сивĕ тата вĕри шывпа тивĕçтерессипе чакарнăччĕ, таса мар шыва юхтарса кăларнин пĕтĕмĕшле çурт валли палăртнă нормативне пачах пăрахăçланăччĕ. Çавна май 2012 çулхи декабрь уйăхĕпе танлаштарсан асăннă услугăсемшĕн тӳлесси 2013 çулхи июлĕн 1-мĕшĕнчен тĕп котельнăйран хутса ăшăтакан нумай хваттерлĕ çуртсем валли çирĕплетнĕ чикĕрен – 12 процентран иртмест, 6 процента яхăн пулать.

**ЧР Конкурентлă политикăпа тарифсен патшалăх службы.**

## Инвестици активлăхĕ – аталану кăтартăвĕ

**Рейтинг**

Чăваш Республикинче инвестици политикин тĕп енĕсем вĕсем ăнăçуллă инвестици климачĕ туса хуни, экономика секторĕн организацийĕсен инвестици ĕçнехĕлне аталантарса пыни, производствăна укçа-тенкĕ хывма майсем туса пани пулса тăраççĕ.

Чăваш Республикинчи муниципалитет районĕсен, хула округĕсен инвестици активлăхне ӳстерес тĕллевпе экономикăпа социаллă аталанăвăн тĕп çул-йĕрĕпе килĕшӳллĕн инвестици активлăхĕн рейтингне ирттереççĕ. Рейтинг итогĕсемпе вара призлă вырăн йышăннă муниципалитет районĕсемпе хула округĕсене укçан премисем парса хавхалантарма пăхнă. Ку укçа-тенкĕне республикăн адреслă инвестици программи шучĕпе уйăраççĕ. 2013 çулта 2012 çул итогĕсемпе призлă вырăн йышăннă муниципалитет йĕркеленĕвĕсене хавхалантарма пĕтĕмпе 2 млн те 501,2 пин тенкĕ уйăрма пăхса хунă.

Иртнĕ çул итогĕсемпе çаксем мала тухнă тесе йышăннă:

1-мĕш ушкăнра (муниципалитет районĕсем хушшинче):

1-мĕш вырăн – **Красноармейски районĕ** (975,468 пин тенкĕ уйăрса парĕç);

2-мĕш вырăн – **Шупашкар районĕ** (525,252 пин тенкĕ).

2-мĕш ушкăнра (хула округĕсем хушшинче):

1-мĕш вырăн – **Шупашкар хули** (1 млн та 480 тенкĕ).

Кунпа пĕрлех çавна та каласа хăвармалла. Экономикăна модернизацилес тĕллевпе республикăри пур муниципалитет районĕсемпе хула округĕсем те комплекслă инвестици проекчĕсене туса хатĕрленĕ. Кун пек проектсем Вăрнарпа Етĕрне районĕсен тата Шупашкар хулин кăна çук. Асăннă проектсене пурнăçа кĕртни патшалăхпа харпăр хăйсем çыхăнса ĕçлессине аталантарма май парĕ. Инвестици проекчĕсенчи кун пек хутшăнусемпе малашне пысăк проектсенче те, кунпа пĕрлех вăтам тата пĕчĕк бизнесра та усă курма палăртнă.

Йышăннă комплекслă инвестици программисем çĕнĕ производствăсене аталантарма, апла пулсан çĕнĕ ĕç вырăнĕсем туса пама, муниципалитет йĕркеленĕвĕнче пурăнакансен пурнăç шайне лайăхлатма май парĕç.

**Алексей ТАБАКОВ,**
**Чăваш Республикин экономика аталанăвĕн, промышленноç тата суту-илӳ министрĕ.**

***Пирĕн районта инвестици проекчĕсем пурнăçа кĕни пирки район администрацийĕн экономика тата агропромышленноç комплексне аталантарассин пайĕн пуçлăхĕ Нина КОСТИНА каласа пама кăмăл турĕ:***

– Районăн 2020 çулчченхи комплекслă инвестици программине район администрацийĕн пуçлăхĕн 2013 çулхи майăн 28-мĕшĕнчи 623 № йышăнăвĕпе çирĕплетнĕ. Унта пĕтĕмпе инвестици проекчĕсем 22 пăхса хунă. Вĕсен пĕтĕмĕшле хакĕ 825,8 млн тенкĕлĕх. 22 инвестици проектĕнчен 4-шĕ бюджетлисем, ыттисем – коммерциллисем.

Отрасльсем тăрăх илес пулсан промышленноçра производствăна модернизацилеме тата аталантарма 1 проект пурнăçа кĕртме пăхнă. Ку вăл – «Сеспель» предприятире çурма прицепсене роботсем сăрламалли çĕнĕ цех хута ярасси. Унăн пĕтĕмĕшле хакĕ – 60,513 млн тенкĕ. Нумаях пулмасть асăннă проект пурнăçланчĕ ĕнтĕ.

Ял хуçалăхĕнче 9 проект пурнăçа кĕртмелле. Вăл шутран çĕнĕ производство йĕркелессипе – 1 проект. Ку вăл – «Путь Ильича» агрофирмăри 1008 пуç выльăх вырнаçмалли сĕт-çу ферми, сĕт блокĕпе ĕнесене пăрулаттармалли уйрăм тăвасси. Проект хакĕ – 517 млн тенкĕ. Кредит 148,7 млн тенкĕ илнĕ, 359 пуç ăратлă выльăх туяннă. Иртнĕ çул комплексăн пĕрремĕш черечĕ – 500 пуç выльăх тытса усрамалăх комплекс çурчĕ, сĕт блокĕпе ĕнесене пăрулаттармалли уйрăм, КПП хута кайрĕç. 175 млн тенкĕ укçа хывнă. Комплексăн иккĕмĕш черетне тума 167,2 млн тенкĕ кредит уйăрса pană. Кунпа пĕрлех çамрăк выльăхсем тытса усрамалли хальхи 2 витене реконструкцилеме тата модернизацилеме пăхнă.

Ытти инвестици проекчĕсем социаллă, суту-илӳ объекчĕсем, çул-йĕр тăвассипе, туризма аталантарассипе çыхăннă.

Республика кунĕ умĕн

# Лавкка ĕçлеме пуçларĕ



***Республика кунĕ умĕн Муркаш райповĕ район çыннисене пысăк парне кӳчĕ. Муркашра юсав ĕçĕсем хыççăн çĕнĕ мелпе ĕçлекен «1000 мелочей» лавкка хута кайрĕ. Савăнăçлă саманта район администрацийĕн экономика тата агропромышленность комплексĕн аталану пайĕн ертӳçи Н. Костина тата ыттисем хутшăнчĕç.***

***– Эпир хамăр патра пурне те хапăл туса кĕтетпĕр, пирĕн алăксем сире валли яланах уçă, – терĕ асăннă райпо ертӳçи Б. Андреев тавар туянакана кунта йыхравласа.***

**Р. ИЛЛАРИОНОВА.**

Шалти ĕçсен пайĕнчен

# Асăрхаттару пĕлтерĕшлĕ

Мăн Сĕнтĕр ял тăрăхĕнчи Васильев хăй пурăнакан çурт умĕнче малтанхи мăшăрĕпе хирĕçсе каять. Пĕлсе тăрсах, ыраттарас тесе, ăна йывăç аврăпа пуçран та, ытти çĕртен те çапать. Çапла вара арçын РФ Уголовлă кодексăн 116 статйин 1 пайĕнче çырса кăтартнă преступление тăвать.

Асăннă тĕслĕхе шалти ĕçсен районти пайĕн дознани уйрăмĕ тишкерчĕ. Ĕçпуç мĕнле сăлтава пула тухнине тĕпченĕ чух ял тăрăхĕнче полицин участокри уполномоченнăйĕпе пĕрле çыхăнса асăрхаттару мероприятийĕсем çителĕксĕр ирттерни те палăрчĕ. Ниçта та ĕçлемен, эрехпе ашкăнакан çынсене административлă йĕркене пăсасран тата преступлени тăвасран асăрхаттарас ĕçе общественноçа явăçтарман. Ку тĕлĕшпе ялсенчи старостăсем те хăйсен тивĕçне кирлĕ пек пурнăçламаççĕ.

Çавăнпа та ял тăрăхĕн администрацине представлени тăратма тиврĕ. Саккунпа килĕшӳллĕн çакăн пек представление вырăнти профилактика канашĕнче пăхса тухса, малашне кун пек преступленисем ан пулччăр тесе тивĕçлĕ мерăсем йышăннине çирĕплетекен справкăна 30 кунран кая юлмасăр çырса памалла. Унсăрăн РФ Административлă право нормисене пăснин кодексĕпе килĕшӳллĕн (17.7 статья) должноçри çынна явап тыттарма право пур. Ял тăрăхĕсен пуçлăхĕсене çакăн пирки тепĕр хут аса илтерни ытлашши мар пулĕ – асăрхаттару вырăнта йĕркелĕх шайне тивĕçлĕ тытса тăма та пулăшĕ.

**Л. ЯДЫКОВА,**
**аслă дознаватель.**

Паян – Асăнупа хурлăх кунĕ

# Нихăçан та вăрçă ан пултăрччĕ

Чăннипех ĕнтĕ вăрçă вăхăтĕнче никама та çăмăл килмен. Пирĕн атте 1891 çулта çуралнă, çавăнпа та ăна фронта илсе кайман. Ватă пулсан та ăна Чулхулари çар заводне ăсатнă. Унта вăрçа хутшăнма вĕренекен çамрăксем патне санитар пулса ĕçлеме янă. Çавăнта выçăллă-тутăллă пурнăçпа туберкулеза ерсе кайнипе тăван киле ăсатнă. Канаша аран-аран çителенĕ, унтан вара лашапа илсе çитернĕ. Çак ĕç 1944 çулта пулнă.

Эпĕ 1945 çулхи ноябрь уйăхĕнче кун çути курнă, атерен виççĕре юлнă. Ăна вара пачах та астумастăп. Атте вĕреннĕ, ăна-кăна аван чухланă çын пулнă. Счетоводра, зоотехникра, хуçалăх правленийĕнче ĕçленĕ. Çапла вара вăл çут тĕнчерен уйрăлса кайнă хыççăн пирĕн нушаллă, выçăллă-тутăллă пурнăç пуçланать. Çимелли çĕр улмисĕр пуçне нимĕн те çук, çулла пулсан – тĕрлĕ курăк. Çăкăрне вара тем пекех çиес килет. Аса илсен халĕ те куçăм шывланать. Хальхи шоколадран та тутлă вĕт. Çуркунне пулсан крахмал çинĕ. Эпĕ пĕчĕккĕ пулнă пирки пуçтарма кайсах курман, тасатма вара пулăшнă. Икĕ алăпа пăчăртатăн та шапшурă крахмал тухса ӳкет. Анне ăна çăрса котлет евĕр çавраксем туса кăмака умĕнче çатма çинче пĕçеретчĕ. Вутти çунса пĕтсен вара тепĕр хут кăмакана лартатчĕ, ку пирĕн тĕп çимĕç пулнă.

1952 çулта эпĕ шкула кайрăм. Ун чухне ачасем нумай пулмарĕç, çавăнпа та икĕ класа пĕрле вĕрентрĕç. Кунта кашниех тĕрлĕрен çемьерен килнĕ: çăкăрлисем те пур, крахмал çиекенсем вара ытларах. Çак самант нихăçан та асран тухмасть. 3-мĕш класра вĕренекен пĕр хĕр ача манăн крахмал котлетне çисе пăхасшăн, вăл вара çăкăр çиет. Çапла вара эпир çимеллисене улăштартăмăр. Епле пысăк телей – тинех манăн алăра тахçанах ĕмĕтленнĕ çăкăр татăкĕ! Ăна эпĕ шкулта çимесĕр аннепе пайлас тесе киле илсе çитертĕм. Эсĕ те çăкăр çитерекен пултăн тесе питĕ савăнчĕ анне. Çапла вара çак хĕр ачапа чылайччен çимеллисем улăштартăмăр.

Астăватăп-ха çăкăр çуккипе сахал мар макăрнине, анне çăкăр шырама тухса каятчĕ. Хăш чухне вара ахалех таврăнатчĕ, никамăн та пире валли çăкăр çук тетчĕ. Çителĕклĕ пурăнакансем патне каяс, анчах каялла мĕн парас? Укçа-тенкĕ çук, налукне вара тӳлемелле. Пĕррехинче налук пуçтаракансем килчĕç, анне килте пулмарĕ. Çапла вара вĕсем шкулта вĕренекен пиччен кĕнеке ещĕкĕнче ухтарма пуçларĕç, кĕнеке листисене пĕрерĕн-пĕрерĕн уçса шыраса 1 тенкĕ укçа тупрĕç. Ăна анне тетрадьсем туянма хунă иккен.

Вăрçă хыççăн çуралнисем мĕн нуши курнă-ши теççĕ пире. Чăнах та çав пурнăçа курманнисем ăнланмаççех çакна. Тăваттăмĕш класченех аттен çĕлĕкĕпе шкула çӳресе. Муркаш шкулне çĕлĕкпе ан çӳретĕр тесе аппа хулăн тутăр туянма май тупрĕ. 7-мĕш класран вĕренсе тухнă хыççăн малалла кайма май пулмарĕ. Аппа хăйсем патне ача пăхма илсе кайрĕ. Кунта вара училище пĕтернĕ хыççăнхи пекех темĕн те ĕçлеме вĕрентĕм. Çуркунне Хорнуйне таврăнтăм. Кил-çурт япăхса пыни аванах курăнать. Пичче Грозный хулинче инженер-геолог пулма вĕренет. Мана сысна ферминче ĕçлеме сĕнчĕç. Каярах вара кил-çурт çĕнетме май тупрăмăр. 1965 çулта эпĕ Шаптак Муркашра çемье çавăртăм. Кунта та хуçалăха çирĕплетме тиврĕ. 2000 çулта вара тивĕçлĕ канăва тухрăм, «Ĕç ветеранĕ» ята тивĕçрĕм. Халĕ патшалăх çăкăр туянма пенси укçи уйăрать, тавах ăна уншăн. Текех вăрçă ан пултăрччĕ.

**Т. ИВАНОВА.**
Шаптак ялĕ.

# Ĕçлекен çын кам вăл?

Ĕçпе тивĕçтерекен центрта

Патшалăхăн тĕп саккунĕ – Конституци – кашнинех ирĕклĕ ĕçлеме май парать: мĕнле професси, мĕнле ĕç суйласа илесси çынран хăйĕнчен килет.

Хальхи вăхăтра вара професси ăсталăхне ӳстерните пĕрлех çĕнĕ профессие вĕренни те пĕлтерĕшлĕ – экономикăри рынок хутшăнăвĕсем çапла хистеççĕ. Маларах предприяти-учрежденисенче яланлăх ĕç вырăнĕнче ĕçлеменнисене ĕçлекен сен шутне те кĕртмен.

Паян вара ĕçлекен çынсен шутне кама кĕртеççĕ? Çак ыйту нумай çынна пырса тивет. Хуравне икĕ мелпе палăртма пулать. Çын халăха ĕçпе тивĕçтерекен службăра органĕсенче официаллă майпа регистрациленнĕ пулсан ăна ĕççĕррисен шутĕнче тесе калатпăр. Раççей Федерацийĕн саккунсен пуххинче акă мĕнле палăртнă: «Ĕçлеме пултаракан, анчах та ĕçлемен тата ĕç укçи илмен, ĕç тупас тĕллевпе ĕçпе тивĕçтерекен служба органĕнче регистрациленнĕ ĕç шыракан тата ĕçлеме пуçлама хатĕр çынна ĕççĕр тесе шутлаççĕ». Пирĕн республикăра кун пеккисем хальхи вăхăтра 5 пин ытла çын, районта – 47. Чăваш Енре вăтамран кашни виççĕмĕш çемье килти хушма хуçалăха аталантарма кредит илнине шута хурсан вара районсенче ĕççĕррисен шучĕ татах та пĕчĕкрех пулмалла.

Пĕтĕм тĕнчери ĕç организацийĕ ĕççĕррисене урăхларах мелпе палăртать. Ятарлă тĕпчев вăхăтĕнче ĕçлемен, анчах та ĕç шыранă тата паян-ыранах ĕçлеме тытăнас тĕллевлĕ 15–72 çулхи çынсене ĕççĕр тесе шутлама ирĕк парать. Çапла вара ку мел çынсен хуравĕсемпе никĕсленнĕ. Паллах, тĕрĕс мар хуравсем те пулма пултараççĕ.

Чăвашсем яланах ĕçлеме юратнине палăрса тăнă. Халĕ те халăх ыттисенчен япăх пурăнас марччĕ тесе тăнăç пурăнма тăрăшать.

Ĕçлекен çын шутне камсем кĕрессĕ-ха вара? Вĕсем çаксем: çырса е сăмахпа каласа тунă килĕшӳпе эрнере пĕр сехет те пулин ĕçлесе уншăн ĕç укçи е натураллă мелпе илнĕ пулсан; харпăр хăйĕн предприятийĕнче, харпăр хăй пуçарнă ĕçре е тăвансем патĕнче, вăл шутра ĕç килĕшĕвĕ тумасăрах ĕçлекен, ĕç паракан, хăй тĕллĕн ĕçлекенсем, çемье предприятийĕнче пулăшакан производство кооперативĕсен членĕсем; килти хушма хуçалăхра, вăрман хуçалăхĕнче, сунарпа, пулă ĕрчетнипе продукцие сутас е улăштарас тĕллевпе туса илекенсем; ĕçре чире пула, чирлĕ çынна пăхнине пула çуккисем тата ытти тĕрлĕ 6 уйăхран нумай мар тăсăлакан отпускрисем, ача çуратма, ăна виçĕ çулччен пăхма отпуск илнисем; çар е патшалăхăн ытти службинчисем.

**И. ДИМИТРИЕВА,**
**Муркашри халăха ĕçпе тивĕçтерекен центр ертӳçи.**

# Çирĕп тылсăр Çĕнтерӳ пулмĕччĕ

Арçынсем фронтра çапăçнă чухне ялта çĕр ĕçĕнче е фабрикăсемпе заводсенче çул çитмен çамрăксемпе хĕрарăмсен, ватăсен вăй хума тивнĕ. Нимĕнле çар та тыл çирĕп пулмасăр вăрçăра çĕнтереймест. Вăрçă вăхăтĕнче тата хыççăнхи çулсенче халăх хуçалăхне ура çине тăратассишĕн мĕнле ĕçлени пирки пĕр тĕслĕх илсе кăтартам.

Исетеркке çынни Татьяна Васильева 1920 çулта çуралнă. Шкулта 7 класс вĕренсе пĕтерсен Шăхасана трактористсен 6 уйăх вĕренмелли курсне кайнă. Унта вăл шкулĕпе те пĕртен-пĕр хĕр ача пулнă. 1935 çулхи çуркунне çав курса вĕренсе пĕтернĕ, Уйкас Янасал тăрăхĕнче хирте тракторпа ĕçлеме тытăннă.

Татьяна Васильевна ун чухне СХТЗ маркăллă тракторпа ĕçленĕ. 1958 çулта МТС-сене пĕтеричченех çав трактор çинчен анман. Вăл тимĕр урапаллă, тимĕр ларкăчлă, кабинăсăр трактор пулнă. Ку тракторпа ĕçленĕ чухне куллен тенĕ пекех мĕн те пулин юсама, йĕркелеме тивнĕ. Час-часах трактор айне кĕрсе выртса юсав ĕçĕсем пурнăçланă. Радиаторне кунне темиçе хутчен шыв яма тивнĕ. Трактора юсама тивсен кирлĕ япаласене е детальсене кутамккана чиксе часчасах МТС мастерскойне çул тытма тивнĕ. Сухапуçне кӳсекпе йăтмалла пулнă. Çурхи, çуллахи кунсенче çапла майпа суха тунă, тырă акнă, комбайн туртнă. Кĕркунне-хĕлле авăн çапнă, арман авăртнă.

Т. Васильева мĕнле ĕçленĕ пирки икĕ тĕслĕх илсе кăтартăпăр. 1954 çулта Татьяна Васильева СХТЗ тракторпа 426 гектар çĕр хатĕрленĕ (планпа 240 гектар), молотилкăпа 500 тонна вырăнне 794 тонна тырă çапса тĕшĕленĕ.1956 çулта 726 гектар çемçе суха тунă, молотилкăпа 1386 тонна тырă тĕшĕленĕ. 364 килограмм çунтармалли-сĕрмелли материал перекетленĕ.

1958 çулта МТС-сене пĕтерсен Татьяна Васильева ĕçлеме колхоза куçнă. Икĕ çул хушши колхозра трактор бригадине ертсе пынă. Кайран та колхоз ĕçĕсене механизацилес енĕпе тăрăшнă, слесарь пулнă. Апаш, Уйкас Янасал, Йӳçкасси – Сурăм тăрăхĕсенче Татьяна Васильевна çитмен уй та юлман пулĕ. 1961 çулта ĕçленĕ чухне аманнипе инвалид пулса юлнă.

Т. Васильева общестăвалла ĕçсене те яланах активлă хутшăннă. Ăна пилĕк хутчен район Совечĕн депутатне суйланă. Татьяна Васильева 32 çамрăка тракторпа ĕçлеме хăнăхтарнă. Вăл шутра хăйĕн йăмăкне Агафияна та. Татьяна Васильевăна 3 медаль тата мухтав хучĕсем 14 парса чысланă. Вăл «Чăваш Республикин Тава тивĕçлĕ механизаторĕ» ят илме тивĕç пулнă.

Аслă Отечественнăй вăрçăра Çĕнтерӳ тунинче Татьяна Васильева пек хастар çынсен тӳпи те пĕчĕк мар.

**Иван ВЯЗОВ.**

Прокуратурăран

# Ултавăн ури кĕске

***Юлашки çулсенче коррупци сĕмĕллĕ преступленисем пирки ытларах та ытларах калаçма пуçларĕç. Район шайĕнче те ун йышши фактсем тĕл пулаççĕ. Асăннă йĕркесĕрлĕхе тупса палăртас тĕлĕшпе район прокуратури чылай тăрăшать, йĕркене пăснисене «тăрă шыв» çине кăларать. Хăш-пĕр самантсемпе паллаштарма район прокурорĕн пулăшуçи А. ЧЕРНОВ кăмăл турĕ.***

– Коррупципе çыхăннă преступленисем районта та тĕл пулаççĕ. Иртнĕ çул взятка илнĕ 1 факт тупса палăртнă, кăçалхи 4 уйăхра та çакăн пек кăтарту. Ĕç вырăнĕпе тĕллевсĕр усă курнипе 2 преступлени пулнă, кăçалхи 4 уйăхра ку енĕпе хальлĕхе йĕркеллех темелле. Пуçарнă уголовлă ĕçсене район судне тăратнă.

**– Уйрăм фактсемпе çирĕплетес пулсан еплерех ӳкерчĕк ума тухать?**

– Икĕ тĕрлĕ преступление тишкерсе кăтартам. Нискасси ялĕ çывăхĕнче «Сăр» автоçулăн 4-мĕш километрĕнче ГИБДД автотранспорчĕн водителĕ çулйĕр правилине пăснă. Çавна май айăплавран пăрăнас тĕлĕшпе ГИБДД ĕçченне 200 тенкĕ взятка панă. Çапла вара водитель РФ УК 291 статьян 2 пайĕнчи йĕркене пăсса преступлени туни паллă пулчĕ. Саккуна пăснă çыннăн 100 000 тенкĕ штраф тӳлеме тиврĕ.

Коррупци сĕмĕллĕ тепĕр преступлени Шомикра пулнă. Психоневрологи интерначĕн директорĕ С. Вачаев тата тĕрлĕ организацисен директорĕ А. Дмитриев пĕрле каварлашса 1,5 миллион тенкĕ ытла тăкак кӳнĕ, вĕсем тĕлĕшпе пуçарнă уголовлă ĕç вĕçленнĕ ĕнтĕ. С. Вачаев РФ УК 159 статьян 3 пайĕнчи (5 эпизод), РФ УК 160 статьян 4 пайĕнчи, РФ УК 286 статьян 1 пайĕнчи, РФ УК 292 статьян 1 пайĕнчи (6 эпизод) йĕркесене сĕмсĕррĕн пăсни, çавна май вĕсем айăплă пулни çирĕпленчĕ. Иккĕмĕш ертӳçĕ те чылай статьяпа йĕркене пăсни палăрчĕ.

2010 çулхи декабрь – 2011 çулхи январь тапхăрĕнче С. Вачаев А. Дмитриевпа килĕшӳ тунă. Çавна май иккĕмĕш ертӳçĕ ертсе пынипе психоневрологи интерначĕн администрацийĕн икĕ хутлă çуртĕнче юсав ĕçĕсем ирттермелле пулнă. Кунта 2 миллион ытла тенкĕ тăкаклама палăртнă. Тĕрĕссипе вара ĕçе çак хаклăх пурнăçламан, анчах та пĕрремĕш ертӳçĕ юсав ĕçне йышăнни пирки алă пуснă. Укçа вара А. Дмитриев фирмин счечĕ çине куçнă.

Ултавлă ĕç малалла пынă. 2012 çулхи апрель – май уйăхĕсенче пĕрремĕш ертӳçĕ пациентсем валли тĕрлĕ çи-пуç туянма учрежденин кассинчен 500 пин тенкĕ ытла укçа илнĕ. Паллах, укçана ултавçă çак тĕлĕшпе усă курман, тумтир туянман, çак самантпа çыхăннă ултавлă документсем тăратнă. Çапла вара С. Вачаев укçа-тенкĕне хăй кĕсйине чикнĕ.

Пĕтĕмĕшле илсен вара психоневрологи интернатне 1,5 миллион тенкĕ ытла тăкак кӳнĕ. Асăннă эпизодсемпе преступлени тунине çирĕплетекен фактсем çителĕклĕ. Айăплава судра пăхса тухнă. Çапла вара 1959 çулта çуралнă Сергей Вачаева 5 çуллăх ирĕкрен хăтарнă, 1979 çулта çуралнă Алексей Дмитриева – 2 çуллăх.

**Р. ИЛЛАРИОНОВА**
**калаçнă.**

# Ĕҫлерĕмĕр вăй хурса, савăнар Акатуйра

Ял хуҫалăх ĕҫченĕсен районти 60-мĕш Акатуйне район администрацийĕн пуҫлăхĕ Ростислав Тимофеев уҫрĕ. Уява пухăннисене, уйрăмах ҫур акинче ырми-канми тăрăшнисене тав туса саламларĕ, ăнăҫу, телей сунчĕ.

– Ҫурхи ака-сухана вăхăтра тата пысăк пахалăхпа пурнăҫларăмăр, сирĕн тăрăшулăхпа умри тĕллеве туллин вăя кĕртрĕмĕр. Малашлăхра та пире пысăк ĕҫсем кĕтеҫҫĕ, мĕн акни-лартнине тĕрĕс-тĕкел ӳстерсе, тăкаксемсĕр пӳлмене хывмалла, – терĕ Ростислав Николаевич мĕн пурнăҫланипе кăмăллă пулнине палăртса.

Ҫавăн пекех район пуҫлăхĕн, Ильич ячĕпе хисепленекен хуҫалăх ертӳҫин Игорь Николаевăн сăмахĕсем те ҫĕр ĕҫченне хавхалантарчĕҫ.

Ҫур акие тивĕҫлĕ шайра пурнăҫ-



«МСО «Моргаушская» хупă акционер обществин бригадирĕ Венера Золототрубова «Чăваш Республикин тава тивĕҫлĕ строителĕ» хисеплĕ ята тивĕҫрĕ



Владимир Рубцова халалласа ирттернĕ волейбол ăмăртăвĕнче «Передовик» команда куҫса ҫӳрекен кубок ҫĕнсе илчĕ

лассинче ҫĕр ĕҫ технологине пăхăнни, юсавлă техника тата сĕрмелли-ҫунтармалли материал ҫителĕклĕ пулни пысăк витĕм кӳреҫҫĕ. Кунта вара хуҫалăхсен вăйĕ кăна ҫителĕксĕр пулнă пулĕччĕ, енчен те патшалăх хăй тӳпине хывман пулсан.

– Ял хуҫалăх ĕҫĕнче патшалăх шайĕнчи вăхăтлă та вырăнлă пулăшу – пирĕншĕн пысăк тĕкĕ, ҫакна асăннă отрасльте вăй хуракансем туяҫҫĕ, вăл шутра уйрăм ҫемьесем те, – терĕ Игорь Васильевич ҫур аки ĕҫне хакланă май.

## Ҫурхи ĕҫ тупăшне кĕрхи пӳлмере курăпăр

Тĕплĕнрех вара ҫур аки ĕҫĕ-хĕлĕпе район администрацийĕн пуҫлăхĕн пĕрремĕш ҫумĕ – экономика тата агропромышленность комплексĕн аталанăвĕпе муниципаллă харпăрлăх управленийĕн ертӳҫи Владислав Ананьев паллаштарчĕ. Кăҫалхи ҫур аки ĕҫне районти ял хуҫалăх производство кооперативĕсемпе агрофирмăсем, чикĕллĕ яваплăхлă обществăсем 13,7 пин гектар ҫинче пурнăҫланă, ҫурхи тĕш тырăпа пăрҫа йышши культурăсем – 10,6 пин гектар, вăл шутра «иккĕмĕш ҫăкăр» – 613 гектар, пĕр ҫул ӳсекен курăк – 1657 гектар, кукуруза – 394 гектар, горчица – 264 гектар, пахча ҫимĕҫ 54 гектар акнă-лартнă. Мĕн акни-лартни тĕрĕс-тĕкел шăтнă. Уйрăмах вара ку енĕпе Суворов яч. хис.,



Москакасси ял тăрăхĕнчи тăхлачăсем апат-ҫимĕҫ хатĕрлеме те, юрлама-ташлама та питĕ ăста

Ильич яч. хис. хуҫалăхсене, «ВаСем» обществăна тата хăш-пĕр хуҫалăха ырăпа асăнмалла.

Палăртма кăмăллă, юлашки ҫулсенче уй-хир ĕҫĕсен калăпăшĕнче хресчен (фермер) хуҫалăхĕсен тӳпи ӳссех пырать. Кăҫалхи ҫур акинче вĕсем ҫурхи тĕш тырă культурисене 3269 гектар, 173 гектар ҫĕр улми, 39 гектар пахча ҫимĕҫ акса-лартса хăварнă. Уйрăмах кунта А. Пихтеров, А. Толстов, В. Горбунов, А. Афанасьева пуҫаруллă, вĕсем ҫулсеренех усă курман уй-хире пусă ҫаврăнăшне кĕртеҫҫĕ.

– Ҫак ĕҫ-хĕл йăлтах сирĕн пĕрлехи тăрăшулăхран килет, апла пулсан паянхи уяв – сирĕн ятпа, – терĕ Владислав Кириллович тав туса саламланă май.

## Хăна-вĕрле – уяв илемĕ

Уявра хисеплĕ хăнасем пулсан вăл татах та сумлăрах курăнать, вĕсем вара кунта йышлă пулчĕҫ. Чăваш Республикин Пуҫлăхĕ ячĕпе Муркашсене Чăваш Республикин Гражданла оборона тата чрезвычайлă лару-тăру ĕҫĕсен патшалăх комитечĕн ертӳҫи В. Петров саламларĕ.

– Муркашсем ĕҫре те пит маттур, канура та сатур. Ҫак сăмахсен чăнлăхне чылай ĕҫ-хĕл ҫирĕплетет. Чăваш Ен Правительстви те сирĕн тăнăҫ аталанăва палăртать, – терĕ Вениамин Иванович Муркашсене уй-хир ĕҫĕсене ăнăҫлă вĕсленĕ ятпа саламланă май.

Ырă кӳршĕсем те килсе ҫитрĕҫ уявпа саламлама. Вĕсен шутĕнче Шупашкар, Етĕрне, Элĕк, Хĕрлĕ Чутай, Мари Эл Республикинчи Горномарийски, Чул хула облаҫĕнчи Спасски районĕсен, Шупашкар хулин представителĕсем ырă сăмахсем каларĕҫ, район администрацине парнесем пачĕҫ.

Уяври чи кăмăллă самант вăл – ĕҫре малта пыракансене тĕрлĕ ведомствăсен Тав ҫырăвĕсемпе, Хисеп грамотисемпе, Дипломсемпе чыслани. Ҫавăн пекех фермер ĕҫне пуҫăнакансене грант тивĕҫнине ĕнентерекен сертификатсем, ача амăшĕн капиталĕн Раҫҫей тата республика шайĕнчи сертификачĕсем, ҫурт-йĕр ҫавăрма социаллă тӳлев свидетельствисем хăйсен хуҫисене тупрĕҫ.

Уявра Оринин ял тăрăхĕнчи Замковсен ял хуҫалăхĕнчи тата Ярапайкасси ял тăрăхĕнчи Красновсен учитель династийĕсене чысларĕҫ.

Ҫавăн пекех уява пухăннисем умне «Поддержка» патшалăх страхлакан компани, «Россельхозбанк», Раҫҫейри Перекет банкĕн Чăваш уйрăмĕн представителĕсем тухрĕҫ. Вĕсем хăйсемпе килĕштерсе ĕҫлекен хуҫалăхĕсемпе организацисене тав турĕҫ, асăнмалăх парнесемпе чысларĕҫ.

## Чăвашсен авалхи урамĕпе утар-ха

Пирĕн халăхăн ырă йăлине, асатте-асаннесен сумлă ĕҫне паян та упратпăр, ыран та ҫаплах пулĕ. Аваллăх кĕтесĕ – йывăҫ пураллă ҫурт, ҫатан карта, ун тăрринче ҫакăнса тăракан тăмран ăсталанă чӳлмек, сĕтел ҫинчи хуплу, сăмавар, ал арманĕ, уйран ҫӳпçи, тĕрлĕ ҫип хуттăрĕ тата ытти – пирĕн несĕлсен ĕҫ-хĕлĕн тăсăмĕ. Кашни уйрăм хуҫалăхра вара ҫăкăр-тăварпа кĕтсе илекен инкесем, кăпăклă сăра сĕнекен пиччесем. Ҫак саманта ташă-такмак, параппан сасси илемлетет. Ку вăл чăваш халăхĕн урамĕ пулчĕ. Асаттеасаннесен ĕҫ-хĕлне ял тăрăхĕсем сăнарларĕҫ. Ҫапла вара уяври кашни ҫын чăн чăваш ялĕнче пулса курчĕ, чăваш апат-ҫимĕҫне тутанчĕ. Ку вăл «Чăваш халăхĕн килти хуҫалăхĕ» конкурс пулчĕ. Сумлă жюри хаклавĕ тăрăх Ярапайкасси ял тăрăхĕн ĕҫ-



Йӳҫкасси ял тăрăхĕнчи Виталий Башкиров тата Турай ял тăрăхĕнчи Валентина Орлова ҫурт-йĕр ҫаврăма свидетельствăсене тивĕҫрĕҫ

хĕлĕ чи сăнарли курăнчĕ. Иккĕмĕш вырăна Уйкас Янасал ял тăрăхĕн ăстисем тухрĕҫ. Виҫҫĕмĕше – Ҫатракасси ял тăрăхĕ. Ыттисем вара – тĕрлĕ номинаци ҫĕнтерӳҫисем.

## Юрă-ташă, вăйă-шӳт илемлетрĕҫ уява

Лантăш вăрманĕ ҫак кун юрă-кĕвĕпе тулчĕ. Ял тăрăхĕсенчи ушкăнсем, уйрăм юрăҫсем, аякри артистсем куракана савăк кăмăл парнелерĕҫ. Уяв программи тĕрлĕрен спорт ăмăртăвĕсемпе пуян пулчĕ. Сывă пурнăҫ йĕркине кăмăллакансем хăйсене волейболла выляссипе, пăт пуканĕ ҫĕклессипе тата ытти енĕпе тĕрĕслерĕҫ. Кашни ăмăртура вара – уйрăм ҫĕнтерӳҫĕ. Волейбол ăмăртăвне Владимир Михайлович Рубцова халалланă. Вăл районăн экономика пурнăҫĕпе социаллă аталанăвне пысăк тӳпе хывнă, ыттисемшĕн ырă тĕслĕх пулнă. Ҫак илемлĕ ăмăртăва унăн ятне парасишĕн пирĕн районăн пысăк тусĕ А.



Ĕҫпе тивĕҫтерекен центрăн ертсе пыракан инспекторĕ Нина Сафиуллина Раҫҫей Федерацийĕн ял хуҫалăх министерствин Хисеп грамотине тивĕҫрĕ





Мăн Сĕнтĕр райповĕ техĕмлĕ апат-ҫимĕҫпе сăйларĕ

Троицкий хытă тăрăшрĕ, вăлах парнесем, спонсорсем тупрĕ, йĕркелерĕ. Ҫапла вара асăннă тупăшура «Передовик» команда куҫса ҫӳрекен кубок ҫĕнсе илчĕ. Иккĕмĕш вырăнта – «Моргаушрайбыт» команда, виҫҫĕмĕшĕнче – «МСО «Моргаушская» команда. Ăмăртăва тивĕҫлĕ шайра йĕркеленĕшĕн В. Рубцовăн хĕрĕ Татьяна тав турĕ. Ҫавăн пекех кунта унăн ҫывăх тусĕсем хутшăнчĕҫ, вăйă ирттерме спонсорла пулăшу кӳчĕҫ.

Ача-пăча вара карусель патĕнче, аттракцион ҫывăхĕнче хĕвĕшрĕ. Батут та вĕсемшĕн чăн-чăн киленӳ пулчĕ. Пĕчĕк автомашинăсем те шăпăрлансене ярăнтарчĕҫ. Кашниех уява курма-туйма пултарчĕ.

Муркаш тата Мăн Сĕнтĕр райповĕсен, уйрăм предпринимательсен суту-илӳ точкисем тĕрлĕ апат-ҫимĕҫпе сăйларĕҫ, ытти тавар сĕнчĕҫ.

Каҫхине Муркаш салинче уява ҫамрăксен программи тăсрĕ. Кунта та вĕҫсĕр-хĕрсĕр юрă-кĕвĕ пулчĕ. Районти художество пултарулăх ушкăнĕсем, Шупашкарти артистсем савăк кăмăл парнелерĕҫ. Куракансем те аякра юлмарĕҫ, вĕсемпе пĕрле юрларĕҫ, ташларĕҫ. Уява район администрацийĕн пуҫлăхĕ Р. Тимофеев пĕтĕмлетрĕ. Районти 60-мĕш Акатуя халалласа Муркашра каҫхине фейерверк пулчĕ.

Уяв чăвашсен пĕрремĕш профессорĕ, «Хыпар» хаҫат никĕслевçи, общество ĕҫченĕ Николай Васильевич Никольский ҫуралнăранпа 135 ҫул ҫитнипе те ҫыхăнса чаплăн иртрĕ.





Уяв концертне художество пултарулăх ушкăнĕсен пĕрлештернĕ хорĕ уҫрĕ

Р. ИЛЛАРИОНОВА.

# Пĕр ачана та пулин телейлĕрех тăвасчĕ

**Сăмах – район администрацийĕн ĕçченĕсене**

***Социаллă тăлăхсем тесе каланине юлашки çулсенче часчасах илтетпĕр. Кун пирки тĕплĕнрех калаçма район администрацийĕн опекăпа попечительство секторĕн ертӳçине И. КАБУРКИНĂНА калаçăва чĕнтĕмĕр.***

**– Ираида Семеновна, социаллă тăлăхсен йышĕ пысăкланнин сăлтавне мĕнре куртăр?**

– Социаллă тăлăхсем вĕсем ашшĕ-амăшĕ пур çинчех тăлăх ача пек ӳсекенсем. Ашшĕ-амăшĕсем е эрех ĕçеççĕ, е вĕсене хăйсен прависенчен хăтарнă. Пирĕн патра учетра пурĕ 94 ача тăрать. Çаксем вĕсем – тăлăх ачасем тата ашшĕ-амăшĕн хӳттисĕр юлнă ачасем: 19 тăлăх ача, 75-шĕ вара – социаллă тăлăхсем. Хăвăрах куратăр, иккĕмĕш ушкăн питĕ пысăк, мĕншĕн тесен ашшĕ-амăшĕсем хăйсен ачине воспитани парассипе тимлемеççĕ, эрех-сăра ăшне путаççĕ, ачисем мĕнле вĕреннипе, вĕсен сывлăхĕ мĕнле пулнипе, тутă-и вĕсем, выçă-и – нимĕнпе те интересленмеççĕ.

**– Кун пеккисем валли явап тыттарассине саккунпа пăхса хунă вĕт-ха?**

– Çапла. РФ Административлă право нормисене пăснисен кодексĕн 5.35 статйи тата Уголовлă кодексăн 156 статйи ашшĕ-амăшĕсене хăйсен тивĕçĕсене йĕркеллĕ пурнăçламаншăн явап тыттарма май парать.

**– Çак статьясем патне «çитиччен» эсир асăрхаттару ĕçне мĕнле ирттеретĕр?**

– Пирĕн асăрхаттару мелĕ пĕтĕмĕшле илсен пĕрре – эпир çемьесене тухса çӳретпĕр. Акă кăçал кăна 232 хут районти çемьесенче пулнă, хăш-пĕрисем патне темиçе хут та çитнĕ. Кунсăр пуçне эпир ачана опекăна тата усрава илнисем патне те çитсе килетпĕр. Унти пурнăç условийĕсене пĕлсе тăратпăр. Çапла вара пирĕн тĕллев – йывăр лару-тăрăва лекме пултаракан е лекнĕ ачасене пулăшасси.

Йывăр лару-тăрулла çемьесене май килнĕ таран пулăшма тăрăшатпăр: япаласемпе те, калаçупа та, консультацисемпе те. Эрех ĕçессинчен сипленме те сĕнетпĕр. Кăçал акă 4 хĕрарăм сипленсе килчĕç. Çакăн пек пулăшу усă кӳмест пулсан, ашшĕ-амăшĕ ачисем пирки пурпĕр аса илмест пулсан пирĕн суда искпа тухмах тивет. Кăçал кăна суд 5 ашшĕ-амăшне ашшĕ-амăшĕн тивĕçĕнчен хăтарма йышăннă, тĕпĕр икĕ ĕçе пăхса тухас тапхăр пырать.

**– Опекăна е усрава илнĕ çемьесенче лару-тăру мĕнлерех? Ачасен хăйсене лăпкă, лайăх туйма условисем пур-и?**

– Пирĕн районта пурĕ 54 çемьере 64 ача опекăра ӳсет, 15 çемье пурĕ 21 ача усрава илнĕ. Опекăна илекен çемьесенче лару-тăру япăх мар, мĕншĕн тесен ачана опекăна илес текенсен документчĕсене тĕрĕслетпĕр, пĕлтĕрхи сентябрьтен пуçласа вара вĕсем ачана опекăна илес умĕн ятарлă курссенче вĕренеççĕ. Ачана опекăна ытларах тăванĕсем илеççĕ пулсан, усрава вара – ют ачасене. Эпир вăл çемьесенче те пулатпăр, тăтăшах тĕрĕслесе тăратпăр. Ачана усрава илесси пирки, паллах, тĕплĕн шухăшламалла. Шел пулин те, ачана усрава илнĕ хыççăн темиçе çултан ăна каялла тĕксе яракансем те пур.

Усрава илнĕ çемьесенче ачана чуна парса ӳстереççĕ, хăшĕсем вара хăйсен тăван пĕрчĕкне ним вырăнне хумаççĕ. Тĕслĕх нумай илсе кăтартма пулать, анчах пĕрне кăна калам-ха. Акă иртнĕ Акатуйра пĕр амăшĕ хăйĕн 4 тата çулталăк çурăри ачисене пĕр пӳрте (вăл пӳртре никам та пурăнман, ăна дача вырăнне усă курнă тесен тĕрĕсрех пулать пулĕ) хупса хăварать те хăй уява тухса каять. Мĕнле чунлă хĕрарăм-ха вара вăл?

**– Çакăн пек тĕслĕхсем çинчен сире пĕлтереççĕ-и е ытларахăшĕпе хăвăр тĕл пулатăр?**

– Хăçан мĕнле: хăш чух хамăр тупатпăр, хăш чух пĕлтереççĕ. Ку тĕслĕхе çынсем пĕлтерчĕç. Тĕрлĕ учреждени-организацисем çакăн пек тĕслĕхсем пирки пĕлтерме тивĕç, мĕншĕн тесен ку саккунлă яваплăхпа çыхăннă. Ачасемпе хаяррăн тытнине е ачасем йывăр лару-тăрăва лекнине пĕлетĕр пулсан пирĕн пата шăнкăравласа пĕлтерĕр, тархасшăн: **телефон номерĕ 62-2-39.** Аноним шăнкăравсене те йышăнатпăр. Пĕрле пулса тен çапла пĕр ачан шăпине те пулин телейлĕрех тума пултаратпăр.

**Самантпа усă курса манăн тата акă мĕн калас килет. Ачасене юратакан çынсем, ют ачана телей парнелеме пултаракан ырă кăмăллă çынсем пирĕн районта та сахал мар. Çавăн пеккисене пирĕн патра кĕтетпĕр. Пĕр ачана та пулин телейлĕрех тума пултарни те пĕлтерĕшлĕ.**

**Н. НИКОЛАЕВА.**

# Йĕрке пирки – ачаранах

**Хăрушсăрлăх**

Ачасен хăрушсăрлăхне мала хурса Катькасри пуçламăш шкул - ача садĕнче çулйĕр правилисене вĕрентессипе пысăк тимлĕх уйăрма тăрăшатпăр. Иртнĕ кунсенче эпир вăтам ушкăнри ачасемпе «Пирĕн юлташ – светофор», аслă ушкăнри ачасемпе «Çул-йĕр правилисем» ятпа вĕрентӳ ирттертĕмĕр. Çул-йĕр çинче яланах асăрхануллă пулмалли пирки ăнлантарнă май ачасене çул урлă каçмалли вырăнсем, тротуарсем мĕншĕн кирлипе, транспорт мĕнле çӳренипе тĕплĕн паллаштартăмăр.

Ашшĕ-амăшĕсен пухăвĕнче те çак темăпа анлă калаçу ирттертĕмĕр, мĕншĕн тесен çулла ачасем хăйсене ирĕклĕрех туяççĕ. Çавăнпа та ашшĕ-амăшĕсен те вĕсене асăрхаттарсах тăмалла.

Пирĕн пата ГИБДД инспекторĕ А. Щербаков аслă лейтенант килнишĕн ачасем питĕ савăнчĕç. Йĕрке хуралçи питĕ интереслĕ те усăллă калаçу ирттерчĕ. Çул-йĕр çинче пулса иртекен инкексен тĕслĕхĕсемпе те паллаштарчĕ. Çул-йĕр çинче кирек хăш вырăнта та, кирек хăш вăхăтра та тимлĕ пулмаллине ачасем лайăх ăнланчĕç. Ыттисене те асăрхаттарма шантарчĕç. Пĕчĕкренех йĕркелĕхе вĕрентни усăллă пуласса эпир шансах тăратпăр.

**В. ФРОЛОВА,**
**Катькасри пуçламăш шкул - ача сачĕн воспитателĕ.**

**Официально**

**ЧУВАШСКАЯ РЕСПУБЛИКА МОРГАУШСКИЙ РАЙОН**
**СОБРАНИЕ ДЕПУТАТОВ ИЛЬИНСКОГО СЕЛЬСКОГО ПОСЕЛЕНИЯ**
**РЕШЕНИЕ**

**18.06.2013 г.** **№С-28/1**

деревня Тренькино

**О назначении досрочных выборов главы Ильинского сельского поселения Моргаушского района Чувашской Республики**

